Районăн хастар çыннисем

# Ĕçчен алăра ĕç ăнать



*Сăн ӳкерчĕкре эсир Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн сĕт-çу ферминче вăй хуракан дояркăсен ушкăнне куратăр. Коллектив иртнĕ çулталăка япăх мар кăтартусемпе вĕçлеме пултарнă. Ферма ĕçченĕсем Н.Е. Журавлева тата Ф.Ю. Антонова хăйсене çирĕплетсе панă ушкăнри кашни ĕне пуне вăтамран 5019-шар килограмм сĕт суса илме пултарнă. Саккăран вара çак кăтартăва 4000 килограмм урлă каçарнă. Республика тĕп хулинче Муркаш районĕн кунне уявланă май вĕсем тивĕçлипех район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн дипломĕсене тата укçан парнесене тивĕçрĕç.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Пирĕншĕн тĕслĕх

# Асаннесем пек пулас тетпĕр

Пирĕн класс ертӳçи С.К. Яртеева «Вăрçă ачисем» темăпа класс сехетне ирттересси пирки пĕлтернĕччĕ. Эпир ку мероприятие Марина Ланцевапа Максим Кудряшовăн асламăшĕсене тата манăн асаннене чĕнес терĕмĕр.

Класс сехечĕ ялти тĕслĕх библиотекăра иртрĕ. Маринăпа Максимăн асламăшĕсем иртнĕ вăрçă вăхăтĕнчи йывăр пурнăçа аса илчĕç. Выçăллă-тутăллă пурăннă, çиме çăкăрĕ те çитмен. Апла пулин те чăтнă, хăйсен хастар ĕçĕпе фронта пулăшнă.

Вăрçă вăхăтĕнчи выçлăх пирки эпир А. Приставкинăн «Ночевала тучка золотая» кĕнекине вуланинчен те аван пĕлетпĕр. Çак йывăрлăха чăтнă ватă çынсем ун пирки хăйсем каласа пани питĕ хумханулла пулчĕ. Марина Ланцева асламăшĕ Мария Александровна вăрçă çулĕсене аса илнĕ май куççулĕсене те чараймарĕ.

Нимĕçсем тытса илнĕ хуласенчен Ильинкăри кану çуртне эвакуаци шучĕпе çынсене илсе килсе вырнаçтарни пирки Максимăн асламăшĕ Валентина Александровна Чигарева аса илчĕ. Вĕсем хушшинче Ленинград хулинчен килнисем те пулнă.

Манăн асанне Вера Алексеевна Ильина фашистла Германие çамрăк яшсемпе хĕрсене илсе кайни пирки каласа пачĕ. Асаннен амăшне нимĕçсем тытса илнĕ Орел хулинчен ют çĕре илсе кайнă. 18 çулта кăна пулнă вăл. Нимĕçсен чуралăхĕнче сахал мар асап тӳсме тивнĕ.

Асанне çакăн пирки каласа пани те интереслĕ. Пирĕн салтаксем çĕнтерӳ тусан асаннен амăшĕн Германире юлма, çителĕклĕ пурнăçпа пурăнма та май пулнă. Мĕншĕн тесен вырăссем çĕнтерӳçĕсем шутланнă. Анчах та вăл Тăван çĕршывшăн, çемйишĕн тунсăхланă, килех таврăнма шутланă.

Асанне хăй Германире çурални пирки çитĕнсе çитсен кăна пĕлнĕ. Ун пирки никама та каласа пама хăранă. Мĕншĕн тесен халăх тăшманĕ тесе Çĕпĕре яма пултарнă.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем вăрçă хирĕнчи салтаксем çине кăна мар, тылра ĕçлесе пурăнакансем çине те çителĕклипех тиеннĕ. Кунта вара ытларах хĕрарăмсемпе ачасем пулнă. Апла пулин те вĕсем пуç усман, Аслă Çĕнтерĕве пĕрле туптанă.

**Ильинка шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекенсем ячĕпе Павел ХОМУТОВ.**

Юбилей

# 33 çул вĕрентӳ ĕçĕнче

Сăмахăмăр Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш ялĕнче çуралса ӳснĕ Нина Никитична Пайманова пирки. Турри çапла çырнă пуль. Шăпах Пĕтĕм Тĕнчери хĕрарăмсен кунĕнче, çурхи чи пĕрремĕш уяв кунĕнче, 1938 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче çуралнă вăл. Ашшĕ вăрçăра 1942 çулта çĕре кĕнĕ.

Тăван шкултан 1956 çулта вĕренсе тухнă. Йывăр вăхăт. Тăраниччен çимелли пирки ан та шутла. Крахмал, пучахсем пухма тивнĕ. Хырăм выççине епле те пулин улталамалла вĕт-ха? Чи пысăк ĕмĕт вăл таса çăкăр тăраниччен çиесси пулнă. Шкул хыççăн 2 çул колхозра ĕçленĕ, 1958 çулта вара Патăръелĕнчи профессипе техника училищине ветеринара вĕренме кайнă.

Вĕренсе тухсан ветеринари участокĕнче врача пулăшакан пулса пĕр çул вăй хурать. Анчах та пĕлĕве ӳстерес шухăша пуçран кăлармасть вăл. Çапла вара 1960 çулта ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрет. 1965 çулта ăна вĕренсе пĕтерсе ученăй-зоотехник пулса тăрать. Вăрмар районĕнчи «Знамя» колхозра зоотехник пулса çулталăк çурă ытларах тимлет.

1966 çулта вăл Куприян Трофимович Пайманова качча тухать, хăйĕн ĕç биографине Муркаш районĕнче малалла тăсать.



1970 çулта алла иккĕмĕш диплом илет, биологипе химы учителĕ пулса тăрать. 6 çул хушши Вăрманкассинчи сакăр çул вĕренмелли шкулта ачасене вĕрентет. 1972 çулта вара Ильинкăри вăтам шкула куçараççĕ. Кунта вăл биологипе ĕç урокĕсене ертсе пырать.

Унăн пултарулăхне, ăста специалист пулнине çак тĕслĕх те аван кăтартса парать. Çуллехех вăл конкурссене, районти, республикăри тата Пĕтĕм Раççейри олимпиадăсене хутшăннă, призлă вырăнсене тивĕçнĕ.

Вĕçĕмех çуллахи каникул вăхăтĕнче шкул çумĕнчи ĕçпе кану лагерĕнче тăрăшнă вăл. Ĕç итогĕсемпе пĕр хут кăна мар районта малтисен ретĕнче пулнă. Шкулти профсоюз комитетне ертсе пыма та ăнах шаннă. Çак çулсенче шкул куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава тивĕçнĕ. 1987 çулта вара профсоюз ĕçне активлă хутшăннăшăн ăна Литвана кайса килме тӳлевсĕр путевка уйăрса панă.

Унăн вĕренекенĕсем хушшинче пултаруллă та хастар, ырă ят çĕнсе илнĕ ĕçченсем сахал мар: Э.М. Васильева, Е.Л. Порфирьева, В.В. Волков, В.В. Волкова, С.В. Магранина врачсем, И.К. Пайманова, В.К. Пайманова, З.Ю. Морозова, Э.В. Митевская биологи учителĕсем – унăн вĕренекенĕсем.

Хастар ĕçчене 1986 çулта «Аслă учитель» ят параççĕ. 1999 çултанпа вăл тивĕçлĕ канура.

Хамăр юлташăмăра, ырă çыннăмăра эпир пурте 70 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн саламласа вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Ильинкăри вăтам шкул коллективĕ.**

Пирĕн почтăран

## Аннепе мухтанатăп

Ман аннене Зинаида Юрьевна Григорьева тесе чĕнеççĕ. Вăл Хопкĕпер ялĕнче ӳснĕ. Учительте ĕçлет. Вăл хăй мĕн пĕчĕкрен ĕмĕтленнине пурнăçа кĕртнĕ.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта 17 çул хушши ырми-канми вăй хурать. Районта тата республикăра ирттерекен тĕрлĕ мероприятисемпе конкурссене хутшăнать. Пĕлтĕр акă «Çулталăк учителĕ», кăçал вара «Чи пултаруллă класс ертӳçи» конкурсра палăрчĕ.

Çак проекта манăн шăллăм та хутшăнчĕ. Районта 3-мĕш вырăна тухрĕ. Республикăра иртекен «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурса хăйĕн ĕçне тăратма шутлать. Аннепе пĕрле ĕçлеççĕ вĕсем, тĕпчеççĕ те...

«Ĕçре те, вĕрентӳре те питĕ маттур, юрлама та, ташлама та ăста», – теççĕ ун пирки пĕрле ĕçлекенсем.

Эпĕ аннене çывхарса килекен уяв ячĕпе чунчĕререн саламласшăн, пурнăçра ун пек пуласшăн.

**М. ГРИГОРЬЕВА.**

## Манăн анне – чи хитри

Манăн анне Светлана Павловна Замкова. «Солнышко» лагерьте медсестра пулса ĕçлет. Ĕçре ăна пурте юратаççĕ, хисепĕ-сумĕ те пур.

Ман анне – питĕ илемлĕ, чипер. Шкулта та лайăх вĕреннĕ. Килте те питĕ тăрăшуллă. Манăн та анне пек пулас килет.

**В. ЗАМКОВА.**

## Анне аллисем ачаш

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта нумай çул хушши математикăна вĕрентет манăн анне Нина Николаевна Максимова. 1984 çултанпа ĕçлесе нумай ачана ăс-тăн пачĕ, пурнăç çулĕ çине тăратрĕ. Иккĕн çитĕнетпĕр эпир: манăн аппа – Настя 10-мĕш класра, эпĕ – Катя, 6-мĕшĕнче вĕренетĕп.

Эпир аннепе туссем. Вăл пире яланах ăнланать, пулăшма тăрăшать.

Аннесен уявĕ çитнĕ ятпа эпир ăна чун-чĕререн саламласшăн, ырлăх-сывлăх сунасшăн.

**К. МАКСИМОВА.**

Ветеран мораль ыйтăвĕсене хускатать

# Тĕрлĕрен пулать юрату...

Халĕ ĕнтĕ чăвашсем хутла пĕлмен тĕттĕм халăх тесе калаймăн. Радионе те итлетпĕр, хаçат-журналсемпе кĕнекесем те вулатпăр, информаци технологийĕсене алла илетпĕр. Чылай енĕпе çĕршывра та малтисен ретĕнче. Телевидени программисене илес пулсан, ытларах çĕрте хĕрпе каччă юратăвĕ пирки нумай. Ку юрату хăш чухне кăмăллă, тепĕр чухне синкерлĕ вĕçленет. Темшĕн вара ытти йышши юрату пирки программăсенче çукпа пĕрех.

Сăмахран, чăваш çынни мĕн авалах, пĕчĕкрен тытăнсах, тислĕк нăрри пек çĕр ĕçĕпе аппаланма юратнă. Пахчара тĕрлĕ сортлă улма-çырла ĕрчетнĕ. Кил картинче тĕрлĕрен выльăх-чĕрлĕх тытнă. Çакна юрату теместĕн-и вара? Çав хушăрах эрехсăра ĕçме, пур ĕçрен пăрăнса нумай çывăрма, çын пурлăхне хапсăнса хăйĕн тума тăрăшакансем те çук мар. Ку та хăйне евĕр юрату вĕт.

Пĕррехинче юлташăмпа концертра ларнă вăхăтра хамăрăн вăрçă вăхăтĕнче иртнĕ çамрăклăха аса илтĕмĕр. Юлташăм ун чухне çапла каласа хучĕ: «Пирĕн çамрăклăх кунĕсем вăрçă хирĕнче тӳпери пĕлĕтсем пекех хăвăрт шуса иртсе кайрĕç». Чылай хушă кайран шăп лартăмăр. Тĕрĕсси пурах çав унăн сăмахĕсенче.

Çапла вара 1418 куна тăсăлнă Аслă Отечественнăй вăрçă вĕçленсен пире тăван киле таврăнма ирĕк пачĕç. Вăрçă хирĕнче пулнă пулин те, хамăрта çамрăклăх туйăмĕ юлнах ĕнтĕ. Камăн-ха юлнă çамрăклăх вăхăтне тĕлли-паллисĕр, эрех-сăра ĕçсе, çын пурлăхне хапсăнса, юратусăр ирттерес килтĕр. Çавăнпах пуль хĕрпе каччă юратăвĕ пирки аса илнĕ май манăн çапла калас килет: «Юрату пирки ниçта та тĕплĕ çырни çук, ăна ăçтан тата мĕнле пуçламаллине те çут çанталăк хăй йĕркелесе пырать. Вăл вара этемĕн кăна мар, çут çанталăкри пур чĕр-чунсемпе вĕçен кайăксен те пур тесе шутлатăп. Анчах çынсен юратăвне вĕсеннипе танлаштараймăн ĕнтĕ. Тепĕр чух вăл вут-кăварпа çил-тăвăла та аса илтерет. Вут-кăвар вара çил-тăвăлпа сӳнме мар, татах хытăрах алхасать.

Хама аса илес пулсан вара манăн вăрçă хирĕнче чун хытнă-ши? Куçăма илĕртекен хĕрсемпе юрату валли нимĕнле сăмах та çăвартан тухайман. Çавăнпа мана хĕрсем эс тӳрккес этем тесе шӳтлесе чунăма ыраттаратчĕç. Пурпĕр пурнăçа тĕлли-паллисĕр ирттерес мар тесе хама килĕшнĕ хĕрсене ман мăшăр пулма сĕнсен пĕрисем килĕшнĕ пек пулса манран кулма вăтанман. Теприсен ашшĕ-амăшĕ хăйсен хĕрне мана парасшăн пулмарĕ.

Шкулта пĕрле пĕр класра вĕреннĕ кӳршĕ ял хĕрĕпе калаçса ашшĕ патне кайсан ак çапла каласа хучĕ: «Енчен те паян сысна çăвăрланă пулсан Юнкăпуç ялне хĕр мар, сысна çури те сутас çук»,– терĕ. Ман çине вĕри шыв сапнă пекех пулчĕ.

Çапла пĕррехинче манăн аттерен чылаях ватă кӳршĕ: «Эсĕ мĕн, Иван, хăвăн валли халĕ те хĕр тупаймастăн,– тесе хучĕ. – Айта сана Хыркассине хамăн тусăн хĕрĕ патне илсе каятăп. Килĕшетех вăл сана. Пĕрре курсан уйрăлаймастăн акă унран». Юрĕ, кайса курăпăр тесе шутларăм. Хамăр ялта хĕрсем тиркерĕç пулсан, Турă пулăшсан, урăх ялтисем тен тиркемĕç терĕм.

Тепĕр кунне пасар кунĕнче вырăна çитрĕмĕр, кӳршĕн юлташĕ патне кĕтĕмĕр. Пӳртри икĕ арçын, пĕр карчăк, виçĕ çамрăк хĕрарăм эпир кĕрсен пурте чăлаланалла шăвăнчĕç. Пĕри вара, чĕри теме сиснĕ евĕр, часах тулалла тухса утрĕ. «Ку вăл çакă пулчĕ»,– систерчĕ кӳршĕ. Çак сăмахсем мана «ак сан валли ĕмĕр вĕçне çитиччен пĕрле пурăнмалли мăшăру» тенĕн туйăнчĕç. Çаплах пулчĕ. Унпа паллашса юрату пирки пĕр сăмах та калаçман пулин те, Турă хушнипе виççĕмĕш тĕл пулу хыççăн туй кĕрлеттертĕмĕр. Вăл хунеме тӳшекне пĕрле ăшăтма, 60 çул та 2 уйăх та 11 кун пĕрле тату пурăнма мăшăрăм пулса тăчĕ. Çакна вара пĕчĕк йăпатупа ултавлă юрату тесе калаймăн. Чун-чĕрепе пĕрне-пĕри туйни, ăнланни, айăпа кĕрсен каçарма пĕлни, иксĕмĕр хушăра нимĕнле ĕçе те уйăрса пайламанни, чи кирли тата пĕрне-пĕри шанни, хисеплени юрату мар-и вара вăл? Çын элекне ĕненменни, хамăр хушăра пĕрне-пĕри мăнна хуманни, çынсенчен сивĕнменни, çынна тиркесе хапсăнманни, пĕрле килĕштерсе пурăнни юрату мар-и вара? Пĕрре те курман-паллаlàман хĕрпе пĕрлешсе алла-аллăн тытăнса мĕн ватăлса çитиччченех пурăнни, хамăр йăха малалла тăсма ача-пăча çуратса пăхса ӳстерсе ура çине тăратни, çĕршыва юрăхлă, халăх хушшинче хисеплĕ çынсем туни юратупа çыхăнман-ши? Çакна эпĕ юрату мар, пысăк юратупа килĕшӳ тетĕп. Малалла вара ултавлă пĕчĕк юрату пирки çакна калани те ытлашши мар пулĕ тетĕп.

Пĕр енлĕ пĕчĕк те ултавлă юрату яланах шӳтлĕ вăйă-кулăран пуçланать. Каччă хĕре мĕнле те пулин хăй майлă çавăрса хитре те çуллă сăмахсемпе астарса хăй шутланине пурнăçлать. Хĕр каччă тыткăнĕнче. Вăл ăна шанать, унăн кăмăлне тивĕçтерет. Кайрантарах хăй йывăр çын пулнине сисет. Кун пирки каччине те систерет. Каччи вара хăйсен характерĕсем пĕр пек мар тесе супать, унăн сукмакĕ çине курăк шăтать. Çав вăхăтрах хăй тепĕр хĕр патне сукмак такăрлатма тытăнать. Кун пек ултавлă юрату кăшт варкăшпах сӳнекен çулăма аса илтерет. Кун йышши юрату пирки халăхра юрă та пур:

Аякри вут çутин мĕн усси

Хуйхăпала тунсăх чуна ăшăтаймасан,

Кĕске те ултавлă юратуран мĕн усси

Ĕмĕре пĕрле ирттереймесен.

Чăн та каччă хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлас тесе хĕр валли тем те тума хатĕр. Çапла вара нумай чух хĕрсем улталанса ача амăшĕ пулса ĕмĕр вĕçне çитиччченех арçынсене шанмасăр пĕччен пурăнса пĕтĕм йывăрлăха, хуйхи-суйхине чăтса ирттереççĕ. Хăш чухне хăйсен йăнăшне каçараймасăр хăйсем çине алă хуни те пулать. Е каччи çине тарăхнипе çуралнă ачисене кăкăр сĕчĕ памасăрах больницăрах пăрахса хăвараççĕ. Ашшĕ-амăшĕ пур çинчех тăлăх турат пулса ӳсекен ачасен пурнăç çулĕ вара тумхахлă та йывăр пуласси пурне те паллă. Хăш чухне вĕсем пурнăç çулне те тĕрĕс суйласа илме пултараймаççĕ.

Хĕрсен йăнăшмалли, улталанмалли сăлтавĕсем питĕ нумай. Е ĕçе вырнаçмалла, е лайăхрах ĕç вырăнне куçмалла, е хваттер черетсĕр илмелле, е ĕçре мĕнле те пулин айăп тусан çăлăнăç шырамалла. Çав сăлтавсене пулах хĕрсем сахал мар хăйсен пурнăçĕнче улталанса çемье çавăрмасăрах ача амăшĕ пулса тăраççĕ, хăйсен йăнăшне ылханса ĕмĕрлеççĕ.

Паллах, алимент укçине шыраса илме пулать ĕнтĕ. Хăшĕсем çапла тăваççĕ те. Анчах та хуйхăна путнă хĕрарăмсем кун пек чухне аларан алла куçма тытăнни, ĕçкĕне ярăнни те сахал мар. Ачи кирлĕ-ши кун пек хĕрарăма ун чухне? Ачи кампа туслашни, ăçта çӳрени ăна сахал интереслентерет кун пек чухне.

Пурте çапла тăваççĕ тесе каласшăн мар. Мăшăрĕ пăрахса кайнă хĕрарăмăн ачине ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларма вара сахал мар тимлеме, пуç ватма тивни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Ачисене те ыттисенчен кая мар тумлантармалла, хуçалăха та юхăнма памалла мар, вăхăтра ĕçне те çӳремелле. Çирĕп туйăм, вăй-хал кирлĕ кун пек чухне. Çирĕп характерлă хĕрарăм кăна чăтса ирттерме пултарать çак йывăрлăхсене.

Хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм, ăсĕ вара сурăх хӳринчен те кĕске тесе те ахальтен каламан пулĕ ĕлĕкхи ватă çынсем. Мĕншĕн тесен хĕр-и вăл, çамрăк хĕрарăм-и, хитре сăмах-юмаха часах чун-чĕрипе ĕненсе ултава лекет. Çуллă сăмахсене мар, чунри туйăма итлеме пĕлни вырăнлăрах пулĕ тетĕп. Çав шалти туйăма итлеме пĕлсе çемье çавăрнă мăшăрсене телейлех тесе шутлатăп. Вĕсен савăнăçĕ иккĕшĕн хушшинче кăна мар, ачисенче те.

Нумай арçын пĕрле ĕçлекенсем е юлташĕсем хушшинче хăйне паттăррăн кăтартма тăрăшать, сăмсине каçăртать. Хĕре улталама пултарни, пĕрне пăрахса тепĕринпе пурăнма тытăнни уншăн паттăрлăх пулас. Паттăрлăх мар, киревсĕр тискерлĕх мар-и вара ку?

Ашшĕсĕр тăрса юлнă ачана алимент укçинчен ытларах юнашар ашшĕн çирĕп алли кирлĕ. Кун пек арçынсен çавăн пирки шутласа пăхасчĕ: çав ачара унăн юнĕ вĕт-ха, вăл унăн тĕпренчĕкĕ. Ăна сан юратуран ытла нимĕн те кирлĕ мар. Ачана тăлăха хăварма пултарнипе мухтанни вара вăл чăн-чăн тискерлĕх, чунсăрлăх.

**И. ВАСЮХИН,**
**вăрçăпа ĕç ветеранĕ.**

Юнкăпуç ялĕ.